25-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

1942
МАЙ
30
ШАМАТКУН
124(6059) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Кашни колхозрах ясли тата столовăй пултăр

Кăçалхи ялхуçалăх çулĕнчи ĕçсен анăçлăхне хĕрарăмсем татса параççĕ. Ĕçĕн пысăк пайĕ вĕсем çине ӳкет. Вĕсем ĕçе хастарлăн тытăнса пысăк çĕкленӳпе туса пыниичен тырпулăн тухăçлăхĕ тата ăна вăхăтра пуçтарса кĕртесси тухса тăрать. Республикăри чылай районсенчи çураки опычĕ çакна лайăх кăтартса пачĕ.

Ялхуçалăхĕнчи çывхарса килекен ĕçсене вăхăтра тата пысăк анăçлăхпа туса ирттересси колхозсенче çирĕп дисциплина тунинчен, колхоз ĕçне колхозниксемпе колхозницăсем пурте пĕр çын пек активлăн хутшăнса ĕçленинчен килет. Партипе правительство колхозниксем обязательнăй йĕркепе ĕçлесе тумалли ĕçкунĕсен минимумне ӳстересси çинчен йышăннă постановленине ĕçхресченĕсем пысăк хавхаланупа кĕтсе илчĕç. Кашни колхозник, колхозница фронтри пек хастарлăн ĕçлемелле, çĕршывпа фронт ыйтнине пурне те туса памалла,—çакăн пек вĕсен кăмăлĕ.

Анчах та, пирĕн колхозницăсем пурте колхоз производствинче активлăн ĕçлеччĕр тесен, вĕсене ĕçлеме условисем туса памалла, вĕсен ачисене ĕç вăхăтĕнче пăхассине лайăх организацилемелле тата колхозсенче пĕрлешӳллĕ столовăйсем организацилемелле. Кашни ялтах ачасен яслисемпе площадкисене организацилесе, вĕсен ĕçĕнче çирĕп йĕркелĕх тумалла.

Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕ çураки пуçланиччен чылай малтан ĕç вăхăтĕнче колхозсенче ачасен яслисемпе площадкисене организацилесси çинчен постановлени йышăнчĕç. ЧАССР Наркомземне тата райсовет исполкомĕсемпе ВКП(б) райкомĕсене çак ĕçе колхозсенче лайăх организацилеме хушса хăварчĕç. Республикăри колхозсенчи яслисенче пурĕ 31.420 ача тата площадкăсенче 40.280 ача пулмалла.

Пирĕн чылай районсемпе колхозсем, хĕрарăмсене ĕçлеме лайăх майсем туса парас тесе, çакна тивĕçлипе пурнăçласа пыраççĕ. Ишлей районĕнчи колхозсенче чылайĕшĕнче çураки вăхăтĕнче ачасен яслисем аван ĕçлерĕç. Ишекри Сталин ячĕпе тăракан колхозра ачаллă хĕрарăмсем те çуракинче хастарлăн ĕçленĕ. Ĕçе тимлĕн тума вĕсене нимĕн те чармарĕ, мĕншĕн тесен колхозра ачасен яслине уçнă, пĕрлешӳллĕ столовăй организациленĕ. Канаш районĕнчи колхозсенче те ĕç вăхăтĕнче пĕрлешӳллĕ столовăйсем организациленĕ. Анчах та хăшпĕр районсенче ачасен яслисемпе площадкисене организацилес тата колхозниксен пĕрлешӳллĕ столовăйĕсене уçас ĕç начар пулса пырать. Ача яслисемпе площадкăсене уçман пирки хĕрарăмсем уйхир ĕçне активлăн хутшăнаймаççĕ, çакăн пиркиех колхозсенче паян тумалли ĕçсем пурнăçланмасăр тытăнса тăраççĕ.

Майăн 26-мĕшĕнче Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ «Çум çумлас ĕçе тата ретсем хушшинче ĕçлессине вăхăтра пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе тумалли мерăсем çинчен» постановлени йышăнчĕç. Çак постановление пысăк пахалăхпа пурнăçлама пирĕн колхозсен пĕтĕм ĕç вăйне мобилизацилемелле пулать. Кăçал пирĕн нихăçанхинчен те вăйларах тырпул туса илмелле. Анăçлăн акса хăварнă тырăсене лайăх пăхса ӳстермелле, вăхăтра, типтерлĕн пухса кĕмелле. Çак ĕçе кашни колхозникпе колхозница активлăн хутшăнсан çеç анăçлăн пурнăçлама пулать. Çавăнпа та колхозсенче ача яслисемпе площадкисене халех организацилемелле, пĕрлешӳллĕ столовăйсем тумалла. Вĕсен ĕçне лайăх организацилесе хĕрарăмсене колхоз производствинче ĕçлеме майсем туса памалла.

Колхозсен сметинче ача яслисемпе площадкисене тытса усрама, вĕсене валли кирлĕ апат-çимĕç продукчĕсемпе оборудованисем илме укçа уйăрса хунă. Унпа усă курмалла. Колхоз председателĕсем ача яслисен, площадкисен ĕçне лайăх организацилеме тивĕç. Вĕсене валли лайăх çурт, участок уйăрса памалла, ачасене пăхма çынсем çирĕплетмелле, вылямалли япаласем илмелле. Ачасене лайăх пăхса усрама, воспитани пама кирлĕ условисене пурне те тумалла.

Ачасене пăхса усракансене уйăрса илессине те тĕплĕн тăвас пулать. Ку ĕçе ачасене юратакан, пăхма пĕлекен çынсене лартмалла. Вăтам шкулта вĕренекен хĕрачасене тата учительницăсене ытларах явăçтармалла. Ачасем яланах тутă, савăнăçлă пурăнччăр. Вĕсене пăхма уйăрнă çынсем ку чыслă ĕçе тивĕçлипе туса пыччăр.

Совет халăхĕ хăйĕн паттăр Хĕрлĕ Çарĕпе пĕрле тăшмана хирĕç хаяр çапăçусем туса пырать. Пирĕн войскăсем нимĕç захватчикĕсене Хĕвеланăçнелле хăвалаççĕ, кашни кунах çĕнĕрен те çĕнĕ ялсене фашистла пусмăртан ирĕке кăларса пыраççĕ. Совет çĕрĕ çинчен гитлерла бандитсене пĕтĕмпех хăваласа кăларас вăхăт инçе мар. Вăл куна çывхартас тесе кашни совет çыннин халĕ фронтри пек ĕçлемелле. Совет патриочĕсен пархатарлă ĕçĕ, фронтпа çĕршыв валли пысăк тухăçлă тырпул туса илни ирсĕр тăшмана пĕтерсе тăкса çĕнтерӳ тума пулăшĕ.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Майăн 28-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ

Майăн 28-мĕшĕнче Изюм—Барвенково енче пирĕн войскăсем противникăн танкĕсемпе пехотин хаяр атакисене сире-сире янă.

Фронтăн ытти участокĕсенче нимĕнле паллă ĕçсемех те пулса иртмен.

Майăн 27-мĕшĕнче нимĕçсен 28 самолетне пĕтерсе тăкнă. Пирĕн 18 самолет пĕтнĕ.

* * *

Майăн 27-мĕшĕнче пирĕн авиацин чаçĕсем фронтăн тĕрлĕ участокĕсенче нимĕçсен 32 танкне, войскăсемпе грузсем турттарса пыракан 235 автомашинине, боеприпассем тиенĕ 35 лавне, 7 полевой тата зенитнăй орудине, 6 минометне пĕтерсе тăкнă е сиенленĕ, чугунçул çинчи 4 состава çĕмĕрсе тăкнă, противникăн пехотине 11 ротăна çити сапаласа янă, вĕсенчен пĕр пайне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Çурçĕр-Хĕвеланăç фрончĕн пĕр участокĕнче хаяр çапăçусем пулса пынă. Кацубинскипе Мирошниченко юлташсен подразделенийĕсем тăшманăн 93 дзочĕпе блиндажне сирпĕнтерсе янă, нимĕçсен пĕр танкне, 7 орудине, 16 пулеметне, 2 минометне тата пехоталарса пыракан 6 автомашинине пĕтерсе тăкнă. Противник хăйĕн салтакĕсемпе офицерĕсене 500 çын ытла çухатнă. Тепĕр участокра Стояков юлташ чаçĕн артиллерисчĕсем инçетри позицисенчен персе нимĕçсен аллинче тăракан пысăк чугунçул станцине вăйлăн тапăннă. Снарядсем тĕл тивсе боеприпассем тиенĕ 10 вагона аркатса тăкнă.

* * *

Калинин фрончĕн участокĕсенчен пĕринче кĕрешекен пирĕн чаçсем нимĕçсене халăх пурăнакан икĕ пунктран хăваласа кăларнă. Çапăçу хирĕнче тăшманăн çĕршер виллисем выртса юлнă. 4 пулемет, 4 миномет, 100.000 патрон, радиостанци тата ытти çар пурлăхĕсем тытса илнĕ. Тепĕр участокра Горбунов юлташ командир пулса ертсе пыракан часть тăшман атакине сирсе ярса нимĕçсен 300 салтакĕпе офицерне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Пугачевпа Баринов сержантсем пулеметран персе нимĕçсен бомбардировщикне тивретнĕ. Самолета вут хыпса илнĕ те вăл çĕре персе аннă. Самолет экипажĕ вутра çунса кайнă.

* * *

Нимĕç офицерĕсен шкулĕсенчен пĕринче вĕренекен Вольфганг Френтцель 1942 çул пуçламĕшĕнче хăйĕн записной кĕнекинче çапла çырса хунă: «Ыран Хĕвелтухăç фронтне тухса каятпăр. Тем пек кĕтнĕ вăхăт çитрĕ çитрех! Çитрĕ çитрех! Çитрех! Калама çук аван-çке!..» Аяларахра фашистсен офицерĕ Френтцель хăй фронтра 3 уйăх хушши пулнă хыççăн мĕн çырса пынинчен уйрăм сыпăксене пичетлетпĕр: «Ĕнтĕ виççĕмĕш çĕр çывăрмастăп эпĕ. Салтаксем тискерленсе кайнă. Пурте салхуллă, хуйха ӳкнĕ, нервсем йĕркерен тухнă. Вĕсемшĕн пулсан таси нимĕн те çук—тăван çĕршыв та, çемье те нимĕн те мар. Вĕсем сывлăх тĕлĕшпе те, шухăш-кăмăл тĕлĕшпе те пăсăлса кайнă çынсем, мĕншĕн тесен пит те нумайĕшĕ ĕнтĕ вырăс çĕрĕнче вилсе выртнă. Пире кунта халиччен никам та пĕлме пултарайман йывăрлăхсем тӳсме лекрĕ. Аспуç пачах арпашса каять. Вырăссем вĕçĕмсĕр тенĕ пекех пирĕн позицисене атакăлаççĕ. Ку вăл—мана ку таранччен курса тӳсме тивнинчен чи хăрушши. Пирĕн енчен кунсеренех вилнисем, аманнисем нумай, пулăшу пама чĕнекен сассем, ахлатса асапланакансем нумай. Мана çакăн пек туйăнать: эпĕ тĕрĕс шухăшлама вĕренсе çитрĕм пулас. Эпĕ малтанхи вăхăтра вăрçă çинчен çырнисем мана халĕ йăлтах кулăшла туйăнаççĕ. Ун чухне ытла та ухмах пулнă...»

* * *

Нимĕçсен 71-мĕш пехотнăй дивизийĕнчи 191-мĕш полкăн 5-мĕш ротинчен тыткăна лекнĕ обер-ефрейтор Эрвин Пипе çапла каласа панă: «Эпĕ тыткăна майăн 17-мĕшĕнче ирхине, хамăрăн янăçсăр контратака хыççăн лекрĕм. Çав çапăçура курни мана хăратса пăрахрĕ. Йĕри-таврах аманнă е вилнĕ нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсем йăванса выртаççĕ. Вилнисем хушшинче рота командирĕ лейтенант Шна, пĕрремĕш взвод командирĕ фельдфебель Гольц, 2-мĕш взвод командирĕ лейтенант Эльтен, 3-мĕш взвод командирĕ фельдфебель Гойер. Пирĕн ротăран чĕррĕн юлни пĕтĕмпе те темиçе çын кăна, вĕсем те тыткăна лекнипе çеç сывă юлнă».

* * *

Мюнхен хулинчи кинотеатрсенчен пĕринче (Германия) Совет Союзĕпе Германи хушшинчи вăрçă фронтĕнче ӳкерсе илнĕ кинокартинăна кăтартнă чухне хĕрарăмсен демонстрацийĕ пулса иртнĕ. Зălра çакăн пек сăмахсем илтĕнсе кайнă: «Пирĕн упăшкасене киле тавăрăр, вĕсемшĕн Хĕвелтухăçĕнче пĕтме нимĕнле сăлтав та çук, киле ярăр вĕсене!»—тесе кăшкăрнă. Полици темиçе хĕрарăма арестлеме хăтланнă. Анчах та фронтран килнĕ салтаксем, çавăн чухне залра пулнăскерсем, арестлеме паман. Кинотеатра кино курма пынă халăхран тасатсан, урамра полиципе халăх хушшинче тытăçу пулса иртнĕ. Нумай хĕрарăмсене тата темиçе салтака амантнă. Хулара нумай çынсене арестленĕ.

* * *

П. пунктра (Югославия) партизансен отрячĕпе вĕсенчен темиçе хут йышлăрах Итали захватчикĕсем хушшинче хаяр çапăçу пулса иртнĕ. Оккупантсене тӳрем вырăна хĕссе кайса, партизансем вĕсене пăшалсемпе пулеметсенчен персе пĕтерме пуçланă. Итальянецсем паникăна ерсе юханшыв урлă выртакан кĕпер урлă каçса тарма пуçланă. Çав вăхăтра хăюллă партизансен пĕр ушкăнĕ, вилĕмрен хăрамасăр, тăшман речĕсене сирсе хăйсен пулемечĕсемпе кĕпер патне тухнă та тăшман çулне пӳлсе лартнă. Итальянецсен 300 салтакĕ ишсе каçма тесе шыва сикнĕ. Анчах та темиçе çын кăна çăлăнса юлнă. Ыттисем пурте пĕтнĕ.

Майăн 29-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерӳ

Майăн 29-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле Изюм—Барвенково енче пирĕн войскăсем противникăн танкĕсемпе пехотине хирĕç вăйлă çапăçусем туса пынă.

Фронтăн ытти участокĕсенче паллă улшăнусемех пулман.

* * *

Хĕвеланăç фронтĕнчи участоксенчен пĕринче кĕрешекен пирĕн часть нимĕçсен пехотипе танксем пулăшса пынипе тунă атакăна сирсе пăрахнă. Пирĕн артиллеристсем персе нимĕçсен 5 танкне тата пĕр бронемашинине пĕтерсе тăкнă. Çапăçу хирĕнче тăшманăн çĕршер вилли выртса юлнă. Тепĕр участокра пирĕн чаçсем вырнаçса тăнă тĕлте нимĕçсен «Ю-88» йышши бомбардировщикне персе ӳкернĕ.

* * *

Ленинград фронтĕнчи уйрăм участоксенче кĕрешекен пирĕн чаçсем пĕр кун хушшинчи çапăçусенче темиçе огневой точкăна тата минометсен батарейисене пĕтерсе тăкнă, противникăн салтакĕсемпе офицерĕсене 500 çынна çити вĕлерсе пĕтернĕ.

* * *

Пирĕн разведка тăвакан отряд нимĕçсен икĕ пунктри гарнизонĕсем çине кĕтмен çĕртен тапăннă. Кĕске çапăçура пирĕн боецсем нимĕçсен 135 салтакĕпе офицерне пĕтерсе тăкнă. Тыткăна илнисем пур. 3 миномет, темиçе пулемет, 30.000 патрон, 40 винтовка тата штаб докуменчĕсене тытса илнĕ.

* * *

Çурçĕр-Хĕвеланăç фронтĕнче кĕрешекен стрелковăй полкăн снайперĕсем нимĕçсен 745 салтакĕпе офицерне пĕтерсе тăкнă. Вĕсенчен 102 гитлеровецне снайпер-красноармеец Намаканов юлташ, 47 гитлеровеца — лейтенант Самсуров тата 30 гитлеровеца—красноармеец Санжеев вĕлерсе пĕтернĕ.

* * *

А. юлташ ертсе пыракан партизансен отрячĕ, Курск облаçĕн оккупациленĕ районĕсенчен пĕринче кĕрешекенскер, юлашки кунсенче нимĕçсен 3 танкне тата 13 автомашинине пĕтерсе тăкнă. Тепĕр районра В. юлташ ертсе пыракан отрядри партизансем 27 гитлеровеца вĕлерсе пĕтернĕ тата хаклă документсем тытса илнĕ.

* * *

Вĕлернĕ нимĕç салтакĕ çумĕнче (унăн хушаматне палăртма май килмен) çыру тупнă, унта çапла каланă: «...Эльза Лальхендорфăн пиччĕшĕ Югославире пулнă. Унта вăл полицире ĕçленĕ. 14 кун каярах илнĕ хыпар тăрăх, ытти полицейскисемпе пĕрле вăл партизансен аллине лекнĕ те ăна вĕсем вĕлернĕ».

* * *

Смоленск облаçĕн нимĕçсем оккупациленĕ районĕсенчен пĕринче кĕрешекен партизансен отрячĕ врач-хирурга, нимĕçсен 7-мĕш танковăй дивизийĕнчи 7-мĕш мотоциклетнăй батальонăн лейтенантне Пауль Пансгена тыткăна илнĕ. Тыткăна лекнĕ лейтенант Н-ски чаçăн штабне илсе пырсан çапла каласа панă: «ССР Союзне хирĕç пыракан вăрçă вăхăтĕнче пирĕн танковăй дивизи 15—16 пин çын çухатрĕ. 300 танкран 10 танка ăхăн çеç юлчĕ. Салтаксем питĕ ывăнса çитрĕç. Нумайĕшсем çавтери хытă ĕнтĕркесе çитнĕ. Çавăнпа та вăрçă мĕнле пĕтесси тата кам çĕнтересси çинчен вĕсем шухăшламаççĕ. Вăрçă хăвăртрах пĕттĕр тесе çеç шухăшлаççĕ вĕсем. Çарта медицина енĕпе пулăшасси начар пулса пырать. Çар врачĕсем пурте пекех пĕчĕк квалификациллĕ. Чирлĕ салтаксенех, аманнă хыççăн е чирленĕ хыççăн сывалса çитеймен салтаксенех малти позицисене хăваласа каяççĕ. Аманнисем нумайĕшĕ çул çинчех вилеççĕ». Тыткăна лекнĕ врач юлашкинчен çапла пĕлтернĕ: «Партизансем мана лайăх пăхрĕç. Вĕсем патĕнче эпĕ хăйĕн чаçĕнчен тарнă пĕр нимĕç салтакĕпе калаçрăм. Вăл гитлерла режима хирĕç тăрать. Çак салтак партизансемпе пĕрле нимĕçсен обозĕсемпе çар чаçĕсем çине тапăнса çӳрет».

ССР Союзĕнчи пир-авăр промышленность предприятийĕсен 1942 çулти Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăвĕн

УСЛОВИЙĔСЕМ

Оборона Халăх Комиссарĕ Сталин юлташ 1942 çулта нимĕçсен фашистла захватчикĕсене пĕтĕмпех çĕмĕрсе тăкма лартнă задача пирĕн аслă тăван çĕршыври халăх хуçалăхĕн пур отраслĕсене те пĕр чарăнми ӳссе пыракан тухăçлăхпа ĕçлеме хушать.

Ивановăри меланжевăй тата Ореховăри хлопчатобумажнăй комбинатсенчи текстильщиксем Хĕрлĕ Çара тумлантарма, çавăн пекех тата çĕршыври халăха валли мĕн май килнĕ таран ытларах пир, çипсем тата хатĕр тавар парса тăма пулчĕç тата Совет Союзĕнчи мĕнпур текстильщиксене Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăва организацилеме чĕнсе каларĕç.

Ивановăри меланжевăй тата Ореховăри хлопчатобумажнăй комбинатсен коллективĕсен пуçарăвне ырласа, Профессиллĕ Союзсен Пĕтĕм Союзри Центральнăй Совечĕпе СССР пир-авăр промышленноçĕн Халăх Комиссариачĕ текстильщиксен Пĕтĕм Союзри социализмла ăмăртăвĕн çакăн пек условийĕсене туса çирĕплетеççĕ:

Хăш предприятисем, талăкри задание тултарса тата ирттерсе тултарса, Хĕрлĕ Çарпа мĕнпур халăх валли планран ытлашши пир, çипсем тата хатĕр тавар ытларах туса кăлараççĕ — çавсем Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртура çĕнтерекенсем шутланаççĕ.

Главзаготхлоппромăн, Главзаготльнопенькопромăн, Главшелксырьен, çăмă малтанлăха ĕçлесе хатĕрлекен Трестăн предприятийĕсем тата ытти хатĕрлев организацийĕсем тăрăх, хăш предприятисем палăртнă срок тĕлне хатĕрлев ĕçне пĕтĕмпех вĕçлеççĕ тата планран ирттерсе промышленноçа чĕртавар параççĕ — çавсем ăмăртура çĕнтерекенсем шутланаççĕ.

Пир-авăр промышленноçĕн ертсе пыракан отраслĕнчи — хлопчатобумажнăй промышленноçри — предприятисен социализмла ăмăртăвĕнче çĕнтерекене Оборонăн Государственный Комитечĕн постановленийĕ тăрăх тунă Оборонăн Государственный Комитечĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавне параççĕ.

Пĕтĕм Союзри социализмла ăмăртăвăн итогĕсене кашни уйăхрах 10-мĕш числаран кая юлмасăр тăваççĕ.

Текстильщик юлташсем! Профессиллĕ Союзсен Пĕтĕм Союзри Центральнăй Совечĕпе СССР пир-авăр промышленноçĕн Халăх Комиссариачĕ сире плана тултармалла тата ирттерсе тултармалла тума чĕнеççĕ! Хĕрлĕ Çарпа пирĕн çĕршыври мĕнпур халăх валли тата ытларах пир, çипсем тата хатĕр таварсем пама чĕнеççĕ.

Ĕç тухăçлăхне ӳстерме, оборудованисемпе туллин усă курма тăрăшăр, машинăсемпе станоксене питĕ типтерлĕ тытăр, çурт-йĕрсенче тасалăха çирĕп пăхса тăрăр.

Уйрăм фабрикăсем, цехсем, участоксем, комплекссем тата профессисем хушшинче социализмлă ăмăрту сарса ярăр. Ĕç нормисене тултаракансен тата ирттерсе тултаракансен хисепне ӳстерсе пырăр.

Ĕç дисциплинине çирĕплетсе пырăр, ăна пăсакансене хирĕç кĕрешĕр.

Ĕçе çĕнĕрен илнĕ рабочисене специальноçсене вĕрентĕр, вĕсене хăвăрăн ĕç опытне парăр.

Хĕрарăмсем-текстильщицăсем, Хĕрлĕ Çара каякансене улăштарма иккĕмĕш профессисене вĕренсе алла илĕр!

Фронтпа çĕршыв валли ытларах пир-авăр парăр!

Çуракинче пысăк ĕç тухăçлăхĕпе тата лайăх пахалăхпа ĕçленĕшĕн, Чăваш АССР Наркомземĕпе унăн политсекторĕ тăратнă тăрăх, ялхуçалăхĕнче малта пыракансен республикăри Хисеп хăми çине кĕртнĕ:

2. **Йĕпреç МТС-ĕ** (МТС директорĕ **И. Е. Свешников** юлташ, политотдел начальникĕ **К. А. Романов** юлташ, старши механикĕ **Михайлов** юлташ). Вăл МТС çуракинче тракторпа тумалли ĕçсен планне майăн 24-мĕш тĕлне 100,5 процент тултарнă. Тракторсем халĕ малалла ĕçлеççĕ. Йĕпреç МТС-ĕн малта пыракан бригадисем çаксем: **Воробьев** бригади—плана 140 процент тултарнă, **Кондаков** бригади—138 процент тултарнă, **Яковлев** бригади—115 процент тултарнă тата **Макаров** бригади—плана 114 процент тултарнă.

Çуракинче пысăк ĕç тухăçлăхĕпе тата лайăх пахалăхпа ĕçленĕшĕн, ВКП(б) райкомĕсемпе ĕççынни депутачĕсен районсенчи Совечĕсен исполкомĕсем тăратнă тăрăх, ялхуçалăхĕнче малта пыракансен республикăри Хисеп хăми çине кĕртнĕ:

48. Советски районри **«Хĕрлĕ партизан» колхоз** (колхоз председателĕ **Н. Я. Яковлев юлташ**). Колхоз ир акмалли тĕштырă культурисене 7 ĕç кунĕнче пысăк пахалăхпа акса пĕтернĕ. Оборона фондне хывма тата нимĕç оккупанчĕсенчен инкек курнă колхозниксене пулăшма колхоз планран ирттерсе 2 гектар акса хăварнă. Çак юлташсем фронтри пек ĕçленĕ: сухаçсем **Трофимова** тата **Никифоров** юлташсем кашниех кулленхи нормăна 130 процента çити тултарса пынă, тырă акакан **И. Алексеев** юлташ нормăна 150 процента çити тултарса пынă тата сӳрелекен **Сычева** юлташ плана кулленех 140 процента çити тултарса ĕçленĕ.

49. **Анастасия Владимировна Александрова** — Хĕрлĕ Чутай МТС-ĕнчи трактористка. Александрова юлташ, трактористкăсен Пĕтĕм Союзри социализмла ăмăртăвне хутшăнса, хăйĕн обязательствине ирттерсе пурнăçа кĕртнĕ. У—2 тракторпа ĕçлесе, вăл çуракинче, çемçе суха çине куçарса шутласан, 70 гектар сухаланă, 80 килограмм горючи перекетленĕ.

50. Хĕрлĕ Чутай районĕнчи Элĕк ялсоветне кĕрекен **Чапаев ячĕпе тăракан колхоз** (колхоз председателĕ **А. В. Васильев** юлташ). Колхоз çуракине лайăх хатĕрленсе тухнă, çураки ĕçне кĕске вăхăтрах—8 ĕç кунĕнчех туса пĕтернĕ. Колхоз пур культурăсене те планра кăтартнă чухлĕ акса хăварнă. Мĕнпурĕ 227 гектар акнă. Оборона фондне хывма тата нимĕç оккупанчĕсенчен инкек курнă колхозсемпе колхозниксене пулăшма колхоз планран ирттерсе 4 гектар пăрса акса хăварнă, 3 гектар çĕрулми лартнă. Колхозра колхозниксен ĕçне лайăх организациленĕ, ĕç вăйне тĕрĕс пайласа тăратнă. Хаçат-журналсене тăтăшах вуласа параççĕ, бригадăсенче, звеносенче докладсем, калаçусем тăва-тăва ирттереççĕ. Пĕрлешсе апат çиессине организациленĕ. Колхозра ĕç планне тунă, ăна кашни бригадăна, кашни звенона çитернĕ.

51. Куславкка районĕнчи **«Коминтерн» колхоз** (колхоз председателĕ **Иван Матвеев** юлташ). Колхоз тĕштырăсене 8 ĕç кунĕнче акса пĕтернĕ. Оборона фондне хывма тата нимĕç оккупанчĕсенчен инкек курнă колхозниксене пулăшма планран ирттерсе 2 гектар акса хăварнă. Акара **Останов** юлташăн бригади вăрçăри пек ĕçленĕ, вăл тĕштырă культурисене 7 ĕç кунĕнче акса пĕтернĕ. Акара çак колхозниксем—**И. Тимофеев, М. Егоров, М. Федотов, А. Иванова, М. Анисимов** юлташсем ырми-канми ĕçленĕ. Вĕсем кулленхи нормăна яланах 125 процент тата ытларах та тултарса пынă.

Пултаруллă трактористкăсем

ВАРМАР, майăн 28-мĕш. **(Телефонпа).** Хĕрарăм-трактористкăсен бригади çуракинче тракторпа тумалли ĕçсен планне пуринчен малтан пурнăçларĕ. Хастарлă ĕçлекен трактористкăсем майăн 25-мĕш тĕлне çуракинчи ĕçсен планне 150 проц. пурнăçласа, машинно-тракторнăй станцире чи малти вырăна тухрĕç.

Паттăр трактористкăсем Сталин юлташ майăн 1-че панă приказ çине ĕçпе ответлеççĕ. Ĕç фронтĕнче пысăк çитĕнӳсем тунипе фронта, çĕршыва пулăшаççĕ. Трактористка Васса Кузьмина СТЗ тракторпа сменăра 4,4 гектар сухалас вырăнне 6 гектар ытла сухалать, комсомолка Раиса Семенова çавăн пекех тракторпах сменăра 6—7-шер гектар сухаласа пырать. Екатерина Рускова тата Ирина Онуфриева трактористкăсем У-2 тракторсемпе ĕçлеççĕ. Вĕсем иккĕшĕ те двухсотницăсем, ĕç нормине тăтăшах икĕ хут ытларах пурнăçласа пыраççĕ.

Хастарлăн ĕçлекен трактористкăсен бригадинче ĕç нормине пурнăçласа пыман трактористкăсем пачах çук. Вĕсем ăмăртса ĕçлеççĕ, пĕр-пĕрне пулăшса пыраççĕ.

Машинно-тракторнăй станцинче комсомолецсемпе çамрăксен бригадине организациленĕ. Ку бригада та пысăк хастарлăхпа ĕçлесе пырать. Çураки планне бригада 107 процент пурнăçланă.

Çуракинчи ĕçсене МТС ыран-паянах вĕçлет. Чылай бригадăсем халĕ колхозсенче çĕртме сухи тăваççĕ. Трактористсем хушшинче ăмăрту вăйлăн пырать. Ĕç тухăçлăхĕ кунран-кунах ӳссе пыни палăрать. Трактористкăсен Пĕтĕм Союзри социализмла ăмăртăвне хутшăннă трактористкăсем хăйсем çине илнĕ обязательствăна çуракинче чыслăн пурнăçларĕç.

М. ЗАЙЦЕВ.

МТС политотдел начальникĕн комсомол енĕпе ĕçлекен помощникĕ.

Амăртура мала тухассишĕн

Чкаловски машинно-тракторнăй станцинче кăçал 35 трактористка ĕçлет. Вĕсем пурте трактористкăсен Пĕтĕм Союзри социализмла ăмăртăвне активлăн хутшăннă, кăçалхи ялхуçалăх çулĕнче пысăк тухăçлăхпа ĕçлеме обязательствăсем илнĕ. Хăйсем çине илнĕ обязательствăсене пурнăçлассишĕн кĕрешсе, трактористкăсем нумайĕшĕ çуракинче паха тĕслĕхсем кăтартаççĕ.

Майăн 25-мĕш тĕлне трактористкăсем пурĕ 1.973 гектар сухаланă, çураки планне 92,6 процент пурнăçланă. Типтерлĕн тыткаласа тата тухăçлăн ĕçлесе, вĕсем çак хушăра çунакан япалана çĕршер литр перекетлесе хăварнă.

МТС-ри 35 трактористкăран 24 трактористка сменăри нормăсене тăтăшах ирттерсе пурнăçласа пыраççĕ. Трактористка Елена Кестова юлташ çуракине тухнăранпах фронтри пек хастарлăн ĕçлет. Урапаллă СХТЗ тракторпа ĕçлесе, вăл çак хушăра 119 гектар çурă сухаланă, çуракинчи ĕç планне 188,8 процент пурнăçланă. Çунтармалли япалана 70 килограмм перекетлесе хăварнă. Кестова юлташ, хăшпĕр кунсенче 8-шер гектар сухаласа, ĕç нормине 200-шер процент тултарса пынă.

Елена Кестовăран унăн юлташĕ Вера Быркина та юлмасть. Вăл та, çемçе çĕре сухалани çине куçарса шутласан, пурĕ 84 гектар ытла сухаланă, çуракинчи ĕç планне 154 процент пурнăçланă.

Трактористка Василисса Кузнецова паха тĕслĕхсем кăтартса ĕçлет. СХТЗ тракторпа вăл 93,7 гектар сухаланă. Кузнецова юлташ хăйĕн çуракинчи ĕç планне 149 процент пурнăçланă.

Трактористка Анисия Иванова тракторпа кăçал пирвайхи çул ĕçлет. Çапла пулсан та çамрăк трактористка хăйĕн пултарулăхне кăтартрĕ. Çуракинчи ĕç планне вăл 124 процент пурнăçларĕ, çунакан япалана 60 килограмм перекетлесе хăварчĕ.

Çакăн пек хастарлăн ĕçлеççĕ Ч[...]ски МТС-ĕнчи трактористкăсе[...] лайăх пĕлеççĕ: ытлашши [...] кашни гектар нимĕç захват[...] вăртрах çĕмĕрсе тăкма пу[...] фронтĕнчи çĕнтерӳ — вă[...] çирĕплетет.

А[...]

ВУТ-КĂВАРТАН СЫХЛАНАС ĔÇЕ ЛАЙĂХ ЙĔР[...]

КАЛИНИНО. Шуркассинчи «Социализм» колхоз руководителĕсемпе колхозниксем, пĕрлешӳллĕ пуху туса, ял хушшинчи йĕркесĕрлĕхсене астуса асăрхаса пыма А. Анисимов юлташа уйăрчĕç. Анисимов колхоз амбарĕсене, витисене тата клуб таврашĕсене çӳпçапран тасаттарчĕ. Амбарсем умĕнче кашни кĕтессех каткасемп[...] пе шыв лартса тухнă. Ялта[...] умĕнчех шывлă каткасемп[...] пур. Ялти ĕççыннисене пу[...] кăвартан сыхланмалли прави[...] лĕн ăнлантарса панă. Ву[...] сыхланас тĕлĕшпе ялта че[...]рал тăраççĕ.

А. ВАС[...]

Отечественнăй аслă вăрçă фрончĕсенче

Пирĕн земляк Н. Маренин

Николай Маренин мĕн çамрăкранпах самолетпа лайăх вĕçме вĕренессин çинчен шухăшланă. Вăл аэроклуба вĕренме кĕнĕ. Унта вĕренсе тухнă хыççăн летчиксене хатĕрлекен училищĕне кайнă. Вара вăл пултаруллă летчик пулса тăнă.

Старши лейтенант Маренин вăтам пӳллĕ, саврака питлĕ, вăйлă, лăпкă çын. Анчах хăйĕн самолечĕ-истребителĕ ăшне кĕрсе ларсанах, унăн вăйĕ татах та хушăнать. Вăл сывлăшра тăшмана хирĕç пысăк ăсталăхпа çапăçать.

Пĕррехинче Маренин хăйĕн юлташĕсемпе пĕрле разведкăна кайнă. Сасартăк курать: вĕсене хирĕç «Юнкерс-88» йышши 4 самолет тата «Хейнкель-113» йышши 2 самолет вĕçсе пыраççĕ.

— Хăнасем килеççĕ, — тесе шутланă лейтенант,—апла пулсан, кĕтсе илĕпĕр.

Самолет çунатчĕсемпе сулласа юлташне систернĕ те, Маренин нимĕçсен бомбардировщикĕсен стройĕ çине кĕрсе кайнă, çав строя сапалантарса янă та истребительсем çине тапăннă. «Хейнкельсем» тарма тытăннă, сыхлакансемсĕр тăрса юлнă «Юнкерссем» каялла кайма çул тытнă. Маренин «Хейнкельсем» хыççăн хăвалама тытăннă, çав атакăра тăшманăн пĕр машинине персе антарнă. Унтан тăшманăн тепĕр тăватă самолечĕ çĕр çине ӳкнĕ.

Истребитель Маренин вăрçă вăхăтĕнче 130 хут ытла çапăçăва вĕçсе тухнă. Вăл бомбардировщиксене сыхласа пырса вĕçнĕ, пĕр çĕре пухăннă фашистла войскăсем çине сывлăшран тапăнса нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсене сахал мар пĕтерсе тăкнă, пирĕн çар чаçĕсене наступлени туса пыма вуншар хутчен пулăшнă.

Старши лейтенант Н. Маренин хăйсем пехотинецсене наступлени туса пыма пулăшни çинчен çапла çырать:

«Мусатов, Третьяков летчиксене тата мана М. районĕнче наступлени туса пыракан пирĕн войскăсене пулăшма задани пачĕç. Унта нимĕçсем вăйлă укрепленисем туса çирĕпленсе ларнă. Тăшман юр кулалаcа ăна шыв сапса хытарнă, унăн ăшĕнче хушăксем тунă, пирĕн енчи вырăнăн кашни метрĕ çине тĕл пеме хатĕрленсе çитнĕ пулнă. Çав вырăн патне хĕвеланăç енчен пырса, эпир аялтанах вĕçсе явăнса, кĕске черетсемпе петĕмĕр. Фашистсене эпир çĕр çумне лăпчăнтартăмăр, вĕсен ирĕксĕрех пеме чарăнмалла пулчĕ.

Наступлени туса пыракан пехота çав вăхăтра рубеж патне çывхарса çитнĕ те, штурм туса рубежа йышăнса илчĕ. Çак кун тата тепĕр хутчен авиаципе пирĕн пехота тачă пĕрлешсе çапăçнине кăтартрăмăр».

Виçĕ истребитель тăшманăн позицийĕсем çинче 25 минута хушши пĕр чарăнмасăр вĕçсе явăннă. Тăшманăн чĕрĕ вăйĕсемпе техникине сахал мар пĕтерсе тăкнă. Çакă вара пирĕн пехотинецсене ăнăçлăн наступлени тума май панă.

Нимĕç захватчикĕсене хирĕç çапăçнă çĕрте хастарлăхпа паттăрлăх кăтартнăшăн старши лейтенант Николай Софронович Маренина малтан Хĕрлĕ ялав орденĕ панă пулнă. Нумаях пулмасть фронтăн Военнăй Совечĕ Маренин юлташа тепĕр орденпа — Ленин орденĕпе наградӑланă. Маренин юлташ чăваш республикинче çуралса ӳснĕ.

И. СТОЛЯРОВ.
Иккĕмĕш рангри военврач.

Фашистсен парашютлă десантне вĕлерсе пĕтернĕ

КАНТАР-ХĔВЕЛАНĂÇ ФРОНЧĔ, майăн 26-мĕш. **(ТАСС спецкорĕ).** Тăшман пирĕн чаçсен тылне парашютлă десантсем пырса пăрахма хăтланни кирек хăçан та ахалех пулать. Халăх пурăнакан пĕр пунктăн районне, фашистсен гарнизоне хупăрласа илнĕ çĕре, нимĕçсен транспортнăй «Ю—52» самолечĕ вĕçсе пынă. Н-ски утлă çар чаçĕн красноармеецĕ Голубко самолет çине винтовкăран пеме пуçланă. «Юнкерс» çунма пуçланă та çĕре ӳкнĕ. Çав кунах юланутçăсем винтовкăсемпе пулеметсенчен хастарлăн персе тăшманăн тата икĕ самолетне ӳкернĕ.

Вăрманта пирĕн подразделенисенчен пĕрин хысне фашистсем вăйлă десант антарнă. Сывлăшра мĕн пулса иртнине çивĕччĕн сăнаса, боецсем тăшмансен парашютисчĕсене вăхăтра асăрханă. Фашистсене пурне те пĕр çын юлмиччен сывлăшрах пĕтерсе тăкнă.

ДЕЙСТВУЮЩИ АРМИ (Хĕвеланăç фрончĕ). УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: танксен десанчĕ малти позицире.

Д. ЧЕРНОВ фотоӳкерчĕкĕ (ТАСС фотохроники).

Кашкăр йĕррипе...

I

Фронт çывăхĕнчи халăха мĕн-мĕн курма тивни çинчен пĕлсен, сивĕ тар тапса тухать. Пур инкеке те, пур асапа та курма тивнĕ кунти халăхăн. Нимĕç комендантчĕн вырăнă куçĕсем сан умăнти юлашки çăкăр чĕллине кураççĕ, ăна эсĕ пĕчĕк Ваççук валли хăвармине пĕлсе тăрсах туртса илсе каять вăл. Хирĕç сăмах хушсан, пĕтĕм килйышупах персе пăрахать. Вĕлересрипе çырлахмасть вăл, пĕтĕм çуртйĕрне вут тĕртсе çунтарать. Эпир çитсе тăнă вырăн иртнĕ çулсенче ытарма çук илемлĕ урам пулнă, теççĕ. Халĕ, акă, çунса пĕтеймен кăварсем çеç кăвак тĕтĕмпе тĕтĕрсе выртаççĕ. Хура юпасем тата ăнсăртран тепле майпа тăрса юлнă мăрьесем хура çулăн икĕ айккипе лартса тухнă тискер маяксем пек курăнаççĕ. Çак «ял» урлă, çакăн пек маяклă çулпа нимĕç фашисчĕсем тарнă. Паян ирпе вĕсене пирĕн боецсем вутпа хистесе ĕнтсе кăларчĕç. Халĕ вĕсем аякра ĕнтĕ. Çырма лапсенче илтĕнекен канонада сехетсерен ялтан аякалла каять...

II

Вилнĕ пек шăплăннă ял чĕрĕлет. Тăван килйышĕсене сухатнă çынсем ĕсĕклесе макăрса çӳреççĕ. Чĕрĕ юлнисенчен те нумайĕшĕ сураннă, вĕсене хĕненĕ, е пере-пере амантнă. Сурансем часах тӳрленĕ, анчах унăн йĕрĕ нихçан та кусран çухалас çук. Уте çунтарнă вырăнсем, хуçалнă ал-ура, çĕçĕпе касса пĕтернĕ питкуç хăйсен ĕлĕкхи илемне тупаймĕç.

Ялйыш пире нимĕнпе виçейми кăмăл хăвачĕпе хĕпĕртесе кĕтсе илчĕ. Пурте пире хăйсен хавалĕ хушнă таран тав тăваççĕ. Вăхăтсăр вилĕмрен çăлса хăварнине кура, асран каймидж уаври пек пире хапăл туса йышăнчĕç. Атă-пушмак юсакан ватă Чурило, красноармеецсен аттисене юсаса, виçĕ кун хушши пилĕкне çĕклемерĕ. Ырми-канми ĕçлесе, хĕрарăмсем пире кĕпе-йĕмсене çуса типĕтсе ĕлкĕртрĕç. Вĕсем, пĕрне-пĕри пӳлсе фашистсем епле апкăнни çинчен калаçа пăраççĕ. Халĕ вĕсем каллех совет килйышĕнче, пĕр çемьере.

III

Акă комиссар Свергун патне виçĕ колхозница пырса кĕчĕç. Аманнă боецсем валли санитарнăй пункт уçнă вĕсем. Хăйсем пурте пирĕнпе пĕрле пырасси çинчен калаçа пĕлтереççĕ. Пире пуля хăратаймасть, вăй çитнĕ таран пулăшас тетпĕр, теççĕ вĕсем. Ялтан туxсанах минăсен сасси янраса тăрать. Автоматсен хаяр черечĕ çатăртатса та шăхăрса иртет. Анчах колхозницăсем хăрамаççĕ, пиртен пĕр шит юлмасăр пыраççĕ. Снарядсен стаканĕсене пуçтараççĕ, юлнă трофейăсене пуçтарма пулăшаççĕ.

Вунтăватă çулхи пионер Миша Коробченский боецсене пирĕн повара апат пама пулăшать.

Каç сулхăнĕ çывхарать. Фронт тата инçетерех куçрĕ. Эпир хĕвеланăç еннe çул тытатпăр. Малалла, кунсерен малалла тăшмана çĕмĕрсе пыратпăр. Тата вун-вуник ял урлă пĕр пысăк хула патне çывхаратпăр. Хĕрӳллĕ вăрçă пырать.

Çак пысăк ĕçре вĕсен усси те пысăк. Тав сире, юлташсем, сывă пулăр, тетпĕр те эпир, кӳршĕ яла тухса каятпăр.

Старши политрук Н. ИЛЬБЕКОВ.
Действующи арми.

[ДЕЙСТ]ВУЮЩИ АРМИ. 1-мĕш Гвардейски Хĕрлĕ ялавлă Мотоцик[лет] полка Гварди ялавне пани. Укерчĕк çинче: Гвардеец-мотоцик[листсем] Гварди ялавне çĕклесе чаплă маршпа иртсе пыраççĕ.

Д. ЧЕРНОВ фотоӳкерчĕкĕ (ТАСС фотохроники).

Гейдриха вĕлерме тапăнни

ЛОНДОН, майăн 28-мĕш. (ТАСС). Паян Прагăри радиостанци Гейдриха вĕлерме тапăнни çинчен калакан хыпарсене тĕплĕнтерех пĕлтерчĕ. Гейдриха вĕлерме Штросемаерски шоссе çинче майăн 27-мĕшĕнче 10 сехет те 30 минутăра тапăннă. Икĕ çын Гейдрих ларса пыракан автомобиль çине, Берлина каякан скер çине, автоматсенчен пеме пуçланă. Пенĕ хыççăн иккĕшĕ те тарса хăтăлнă.

Виширен пĕлтернĕ тăрăх, Гейдрихăн сывлăхĕ начар.

Англин информаци министерстви çапла пĕлтерет: майăн 28-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле, Гейдриха вĕлерме тапăнни çинчен калакан хыпарсем çитсен, Лондонран радио тăрăх Чехословаки халăхне чĕнсе каланă. «Пĕтĕм тĕнче çапла шутлать,—тенĕ чĕнсе каланинче: —Прагăна Гитлерăн чи хаяр, хĕрхенме пĕлмен палачĕсене янипе гитлеровецсем чехсен паттăрлăхне тата вĕсен пусмăра хирĕç кĕрешекен вăйĕсем хăватлине ирĕксĕрех йышăнаççĕ. Норвеги, Франци, Голланди тата Гейдрих хăйĕн хура ĕçĕсене тунă çĕршывсенчи ытти халăхсем те паянхи кун Чехословакие тавтуса асăнаççĕ».

Гитлеровецсем чех халăхне иртĕнсе кайса пусмăрлани

ЖЕНЕВА, майăн 28-мĕш. (ТАСС). Прагăри радио çапла пĕлтернĕ: Гейдриха вĕлерме тапăннă пирки Германи влаçĕсем «Чехипе Моравм протекторачĕнче» пурăнакан халăха 15 çул тултарнисенчен пуçласа пурне те майăн 29-мĕшĕнчи каçран кая юлмасăр полицие пырса çырăнма хушаççĕ. Çак срок иртнĕ хыççăн камăн регистраци тунă карточка пулмасть, çавсене пурне те персе пăрахаççĕ. Çавăн пекех тата регистрацие пыман çынсене пытарса усракансене те персе пăрахаççĕ.

Женеврăри журналистсем хушшинче çак мероприятисем çинчен çапла калаççĕ: çавă вăл Гитлерăн Чехословакири влаçĕсем чех халăхне пĕтерсе хума хатĕрленнине пĕлтерет, теççĕ.

Франци патриочĕсем гитлеровецсен парадне пĕтерсе лартнă

НЬЮ-ЙОРК, майăн 28-мĕш. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Францин кăнтăр пайĕнче Безье хулинче Франци фашисчĕсем майăн 27-мĕшĕнче Англие хирĕç çырнă плакатсемпе лозунгсем çĕклесе парад туса ирттерме хăтланнă, вĕсене Лаваль çумĕнче тăракан статс-секретарь адмирал Платон ертсе пынă. Урамсене тухнă хулари халăх парадри çынсенчен кулса мăшкăллама тата протестлеме пуçланă. Урамсенче тытăçусем пуçланса кайнă, ку ĕçе 1.500 çынна çити хутшăннă. Гитлеровецсен парадне пĕтерсе лартнă. Халăх хĕнеме пуçланă гитлеровецсене пулăшма полициренпысăк отрядсем çитнĕ. Нумай çынна арестленĕ. Хулари халăх питĕ хумханнă.

Виши правителĕсене Германия хытăрах хĕстерме пуçланă

ЛОНДОН, майăн 27-мĕш. (ТАСС). Англире тухакан хаçатсем Виши правителĕсене Германипе Италия юлашки вăхăтра хытăрах хĕстерме пуçлани çинчен калаçа çыраççĕ. «Таймс» хаçатăн корреспонденчĕ Франци чиккинчен çапла пĕлтерет: Лавале Виши правительствин пуçлăхĕ туса лартнă чух Гитлерăн тĕп тĕллевĕ Франци флотне вăтаçăр тинĕсре çапăçма тата Германипе Италин Ливири войскисене пулăшма тытса илесси пулнă. Лаваль власть пуçне тăрсанах, вăл Туниса, Савойăна, Ниццăна тата Корсикăна оккупацилеме ирĕк патăр тесе, Берлинпа Рим пĕрле Вишине хĕстерме тытăнчĕç. Майăн 17-мĕшĕнче нимĕçсем Парижра Виши представителĕсемпе калаçнă чух калаçăвăн тĕп ыйтăвĕсенчен пĕри—тĕнĕл держависем Бизертăна пĕтĕмпе хăйсен аллине пама ыйтни пулнă.

Англи пичечĕ çапла пĕлтерет: Итали Ниццăна, Корсикăна тата Савойăна халех оккупацилеме шутлать, Гитлер ăна унăн Франци умне лартнă требованийĕсемшĕн тăма сăмах панă, мĕншĕн тесен Гитлера Совет Союзне хирĕç вăрçма Италирен тупă какайĕ тата нимĕç предприятийĕсем валли ĕç вăйĕ илсе тăни кирлĕ. Çавăн пекех тата хаçатсем çакна палăртаççĕ: Франци тĕлĕшпе Итали кăларса тăратнă требованисене Гитлерăн Муссолинин пĕтĕмпех вăйсăрланса çитнĕ авторитетне çирĕплетес шутпа тата Италин шалти политикăллă ларутăрăвне çĕнĕрен çивĕчленсе каймалла мар тăвас шутпа та хапăлламалла пулнă, тесе çыраççĕ.

Гитлеровецсен шучĕпе, Лаваль Германипе Италин требованийĕсене пурнăçа кĕртес ĕçре çителĕксĕр çирĕплĕх кăтартать, халăх тарăхса хумханса каясран хăрать пулмалла.

Лавале хĕстернине кăтартас тата унăн çирĕпсĕрлĕхне пĕтерес шутпа, нимĕçсем хăйсен Дориопа Деа ертсе пыракан агенчĕсен групписене активлатаççĕ. Дориопа Деа Гитлера Парижра правительство тума сĕннĕ, çапла майпа вĕсем, Виши правительствине унăн хăйĕн анчах пулса тăракан прависемсĕр хăварасшăн, текен сăмахсем сарăлаççĕ.

«Дейли скетч» хаçат çапла çирĕплетсе калать: Лаваль нимĕçсен требованийĕсенчен çуррине пурнăçлама, çав шутра Францири предприятисенче тĕнĕл держависем валли хĕçпăшалсем тума кăларма килĕшнĕ, тет.

Çав вăхăтрах Лаваль, пăлхану пулма пултарнине туйса, Франци халăхне хирĕç çĕнĕ репрессисем хатĕрлет тата полици вырăнĕсене хăй майлă тăракан хастарлă çынсене лартать.

Гитлер Франци флотне тытса илме шутлать

НЬЮ-ЙОРК, майăн 28-мĕш. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, пур даннăйсем те çакна систереççĕ: Гитлер Францин Тулонри флотне сасартăк тытса илме шутлать.

Ассошиэйтед пресс агентстви çапла пĕлтерет: Лаваль Германи морякĕсен чылай пысăк йышне, Францин çар карапĕсене вĕрентме шутласа, çар ĕçне Францин çар карапĕсем çинче тата учебнăй станцисенче вĕренме ирĕк панă.

Францири рабочисен каторгăлла ĕç условийĕсем

НЬЮ-ЙОРК, майăн 28-мĕш. (ТАСС). Де Голль кăларса тăракан «Франция калаçать» ятлă бюллетень пĕлтернĕ тăрăх, промышленноçлă Сент-Этьенн районĕнче (Францин оккупацилемен зони) пăлханусем пĕрре те чарăнмаççĕ, мĕншĕн тесен влаçсем кунти рабочисем валли питех те йывăр, каторгăлла ĕç условийĕсем туса хунă. Предприятисенче инкек-синкексенчен сыхланмалли техника пачах та çук. Çавăн пирки ĕнтĕ инкек-синкексен шучĕ калама çук хăвăрт ӳссе пырать.

Пур япала та хакланнă çемĕн хакланса пырать, халăха продовольстви парса тăрас ĕç начарланнăçемĕн начарланса пырать. Халăх выçă пурăнать.

Англи войскисем Бирмăран тухса кайнă

ЛОНДОН, майăн 28-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Александер генералăн войскисем Бирма территорийĕнчен тухса кайнă.

Лондонри хаçатсен корреспонденчĕсем Англи çарĕ Бирмăран Ассама чакни çинчен тĕплĕнрех пĕлтерекен хыпарсене пичетлесе кăларнă. Англи çарĕ Бирмăран вăхăтра чакса ĕлкĕрнĕ. Чăнкă тусем урлă каçакан пĕртен пĕр çула вăйлă çумăрсем ишĕлтерсе антариччен пĕтĕм çар каçса пĕтнĕ. Англи çарĕсем çав çулăн юлашки пайĕпе пынă чухне вăл ишĕлсе анма пуçланă та. Халĕ çав тусем урлă каçмалли çулпа çӳреме çук ĕнтĕ.

Югослави партизанĕсем итальянецсен карательнăй отрядне аркатса тăкнă

СТАМБУЛ, майăн 28-мĕш. (ТАСС). Çак кунсенче итальянецсен карательнăй отрячĕ Далмацие пынă. Çав отряда Югослави партизанĕсем аркатса тăкнă. Отряд начальникне, карабинерсен начальникне тата фашистсен темиçе офицерне вĕлернĕ.

Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен çар миссийĕ Англие çитнĕ

ЛОНДОН, майăн 27-мĕш. (ТАСС). Информаци министерстви çапла пĕлтерет: Америка çарĕн Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен сывлăшри çар вăйĕсен начальникĕ генерал-лейтенант Арнольд ертсе пыракан аслă офицерсен ушкăнĕ Англие çитнĕ. Америка офицерĕсем Англипе Америка вăрçăра пĕр-пĕрипе килĕштерсе çапăçас ыйту тăрăх Англи командованийĕпе канашлама пынă.

Ливири вăрçă

ЛОНДОН, майăн 27-мĕш. (ТАСС). «Дейли телеграф энд морнинг пост» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, февраль уйăхĕнчен пуçласа Ливи фронтĕнче икĕ енĕ те икшер хут наступлениллĕ операцисем туса ирттернĕ. Тăшманăн линийĕ позици тĕлĕшĕнчен кăштах лайăхрах. Вăл лини Газаларан темиçе миля хĕвеланăçнелле выртакан Тульскран пуçланать те кăнтăр-хĕвеланăç еннелле Тенжедер районĕ патнелле пырать. Икĕ енĕсем хушшинче нихăш енĕ те йышăнман лаптăк выртать. Унăн сарлакăшĕ, вăтамăн шутласан, 10—15 миля пулать.

Тĕнĕл держависен вăйĕсем Ливи фронтĕнче Англи вăйĕсенчен йышлă мар, англичансен тата унта танксем ытларах. Англи авиацийĕн боевой активноçĕ ытларах палăрса тăрать. Анчах, апла пулин те, унта нимĕçсем наступлени пуçласа ямĕç теме çук.

СОВЕТ СОЮЗĔ ТĂРĂХ

УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Тарба Дарико юлташ — Берия ячĕпе тăракан колхозри стахановка (Абхаз АССР, Гудаутски район) чей тĕмне пăхса ӳстерес ĕçре кăтартса панă нормăна 250—300 процент тултарать.
Х. ПАРАСКЕВОПУЛО фотоӳкерчĕкĕ (ТАСС фотохроники).

Планран ирттерсе тунă танксен колонни

Уралри танксем тăвакан Н-ски заводра Бурят-Монголи АССР ĕççыннийĕсен делегацийĕ çитнĕ. Бурят-Монголири ĕççыннисем пухнă укçапа делегаци Хĕрлĕ Çара парне пама танксем илнĕ, çав танксене завод планран ирттерсе туса кăларнă.

Планран ирттерсе туса кăларнă танксен колоннине Хĕрлĕ Çар воинĕсене панă. (ТАСС).

Партизансем валли парнесем

Совет партизанĕсем валли парнесем пухас ĕç çĕршывра пысăк çĕкленӳпе пулса иртет. Новосибирскра партизансене ярса пама 400 михĕ посылка хатĕрленĕ. Калинин михĕрех çакăн пек япаласем пур: атă, брюки, гимнастерка, пĕр мăшăр кĕпе-йĕм, алшăлли, супăнь, бритва, котелок тата çынна кирлĕ ытти япаласем пур. Облаçри районсенче апат-çимĕçсем нумай пухнă. Парнесем тиенĕ эшелона ăсатма ĕлĕк Çĕпĕрте партизансем пулса кĕрешнĕ делегатсем каяççĕ.

Кузнецкри металлургсем Сталинскри ĕççыннисемпе пĕрле Белорусси партизанĕсем патне 3000 япала ытла янă.

Охра ĕççыннисем темиçе кун хушшинче 10 пин япала ытла пухнă. Хуларн приемнăй пунктра ятарласа хĕрарăмсем - партизанкăсем валли хатĕрленĕ 400 япала пухăннă.

Пензăри комсомолецсем Белорусси партизанĕсем патне ярса пама супăнь, носки бритвăсем, çип, енчĕксем, картуссем, ботинкăсем, кĕпе-йĕм хатĕрленĕ.

(ТАСС).

Харьков çывăхĕнче сахăр кăшманĕ вăрлăхне тăвас ĕçе çĕнĕрен йĕркелесе янă

Харьков облаçĕн нимĕç оккупанчĕсенчен ирĕке кăларнă районĕсенче сахăр кăшманĕ вăрлăхне тумалли çĕр участокĕсене çĕнĕрен йĕркелесе ярас ĕç пуçланнă. Сахăр кăшманĕ акакан сахăр районĕ вăрлăх тумалли кăшмансене лартма 500 гектар ытла уйăрнă. Харьков Сахаротресчĕн совхозĕнче вăрлăхлăх кăшман нумай лартма палăртнă. Сахăр кăшманĕн вăрлăхне ӳстерекен колхозсене хавхалантарма укçа-тенкĕ тата сахăр пама пăхса хунă. (ТАСС).

Иккĕмĕш квартал планне 132 процент тултартăмăр

ИШЛЕЙ. Мамăш ялсоветĕнчи колхозниксем, фронта пур енĕпе те пулăшма кирлине шута илсе, государство умĕнчи парăмсене срокчен тӳлеме тăрăшаççĕ. Е. Петровский, П. Филиппов, П. Семенов, К. Федоров, К. Романов, М. Новикова юлташсем пур парăмсене те извещенисене алла илсенех тӳлесе татрĕç. Чылай колхозниксем хăйсен укçа-тенкĕ парăмĕсене ялсоветне пырса тӳлеççĕ. Буденный ячĕпе тăракан колхоз членĕ П. Зубков юлташ вăрçă вăхăтĕнчи налога çийĕнчех ялсоветне пырса тӳлерĕ. Колхозниксен çавăн пек активлăхне пула ялсоветĕ II-мĕш кварталта укçа-тенкĕ пухмалли плана майăн 20-мĕш тĕлне 132 процент тултарчĕ.

Государствăн 1942 çулти Воеринăй Заемне вырнаçтарас ĕç те ялсоветĕнче ăнăçлăн иртрĕ. Заема колхозниксемпе единоличниксем 31 пин тенкĕлĕх, колхозсем 25.500 тенкĕлĕх çырăнса укçине икĕ кун хушшинчех тӳлесе татрĕç. Ку тĕлĕшпе «Коммунист» колхоз председателĕ К. Федоров юлташ ырă пример кăтартрĕ. Вăл хăй заема пин çурăлăх çырăннипе пĕрлех колхозниксем хушшинче 10.700 тенкĕлĕх сарса, укçине пуринчен малтан пухса пачĕ. Çавăн пекех подписка укçине пухас тĕлĕшпе налог агенчĕ С. Смирнова, ялти активистсем К. Романов тата И. Петров юлташсем тăрăшса ĕçлерĕç.

Б. РЫКОВ.
Ялсовет исполкомĕн председателĕ.

ИВАН ИВНИК

(Некролог)

Йывăр чирпе чирлесе выртнă хыççăн, май уйăхĕн 28-мĕшĕнче каçхине, Шупашкар больницинче чăвашсен паллă поэчĕ—лирик Иван Николаевич Ивник вилсе кайрĕ.

И. Н. Ивник юлташ хăй юратнă литература ĕçĕнчен хăйĕн творчествăллă таланчĕ сарăлса çитсен, литература тĕлĕшĕпе хĕрӳлленсе ĕçлес тапхăрта çамрăклах уйрăлчĕ. Вăл 28 çулта кăначчĕ-ха. Çамрăк пулин те, чăваш совет литературине хăй çырнă лирикăллă сăвăпоэмăсемпе тата ытти чĕлхесенчен куçарнă паллă произведенисемпе пуянлатма Ивник пысăк ĕçсем турĕ. Ивник çырнă сăвăсемпе поэмăсем уйрăмăнах чăваш çамрăкĕсем хушшинче пысăк вырăн йышăнаççĕ. Вăл çырнă сăвă-юрăсенчен чăваш композиторĕсем юрăсем çырнă, вĕсене халăх хушшинче юратса юрлаççĕ.

Поэт чĕри тапма чарăнчĕ. Анчах та вăл çырнă сăвă-юрăсем, поэмăсем, халăх юмахĕсем, вăл ытти халăхсен чĕлхинчен куçарнă поэзиллĕ произведенисем чăваш литературинче нумай çулсем пурăнĕç, вĕсене чăваш халăхĕ юратса вулĕ, — вĕсене вулакан май хăйĕн вăхăтсăр вилнĕ поэчĕн ятне яланах хисеплесе асăнĕ.

Ивник чăваш литературине çамрăклах кĕрсе ăна аталантарассишĕн, пуянлатассишĕн вунă çул ытла ĕçлерĕ. Чирĕ аптратнă хушăра та вăл текех çĕнĕрен çĕнĕ произведенисем çырма ĕмĕтленетчĕ. Ивник паянхи кунпа, паянхи ĕмĕтсемпе пурăнатчĕ. Вăл совет халăхĕн отечественнăй аслă вăрçăри çĕнтерӳĕсемпе хавхаланатчĕ, геройла Хĕрлĕ Çар тискер фашизмăн ирсĕр вăйĕсене çапа-çапа аркатни ăна паттăрлататчĕ. Юлашки вăхăтра Ивник фашизма хирĕç «Ылхан» ятлă поэма çырма тытăнсаччĕ. Анчах та чир ăна поэмăна çырса пĕтерме памарĕ.

Лăпкăн çывăр, юратнă юлташăмăр! Тăпру çăмăл пултăр! Эсĕ туйма шутланă ĕçсене санăн юлташусем туса çитерĕç.

Н. Шелепи, С. Элкер, Н. Васянка, С. Шавлы, А. Кăлкан, А. Эсхель, Д. Данилов, Иван Мучи, Максимов-Кошкинский, П. Осипов, К. Чулкаç, К. Сергеев, Н. Айзман, Г. Савкай, С. Прокопьев, И. Малкай, В. Воробьев, Г. Лисков, А. Орлов — Шуçăм, Г. Лебедев, Л. Закс, А. Поморский, М. Спиридонов, Ю. Зайцев, П. Пралек.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

От Комиссии по похоронам поэта Ивана Ивника

Комиссия по похоронам поэта Ивника Ивана Николаевича сообщает, что перенос тела поэта из Чебоксарской больницы в здание Управления по делам искусств при СНК Чувашской АССР (ул. Герцена, 9) состоится 30 мая в 6 часов вечера, а вынос на погребение—31 мая в 12 часов дня.

Комиссия.

Чăваш Совет Писателĕсен Союзĕн Правленийĕ

майăн 28-мĕшĕнче 19 сехетре Шупашкарта, йывăр чирпе чирлесе выртнă хыççăн, чăвашсен паллă поэчĕ Иван Николаевич **ИВНИК** вилни çинчен хурланса пĕлтерет.

ССП Правленийĕ.

Чăваш АССР Çутĕç Халăх Комиссариачĕ

Чăвашсен чĕлхепе литературăн тата историн наукăпа тĕпчев институтĕнче сотрудник пулса ĕçленĕ, совет писателĕсен союзĕн членĕ

Иван Николаевич ИВНИК

вăхăтсăр вилни çинчен куляса пĕлтерет.

Чăваш АССР Çутĕç Халăх Комиссариачĕ.

Дом народного творчества и Оргкомитет Союза советских композиторов

выражает глубокое соболезнование семье и родным по случаю смерти талантливого поэта — автора текстов многих песен чувашских композиторов

тов. ИВАНА ИВНИКА.

Коллектив сотрудников Исполкома Чебоксарского Горсовета выражает глубокое соболезнование семье и родным зав. общим отделом Исполкома Держaвиной К. П. по случаю преждевременной смерти ее мужа —

ИВНИКА ИВАНА НИКОЛАЕВИЧА.

ДЛЯ РАБОТЫ В ЧЕБОКСАРАХ требуется плановик-экономист. Обращаться: Канашская, 17, «Техжирпром», тел. 1—66.

НЕФТЕБАЗЕ срочно требуются на постоянную работу:
весовщиков 2 человека,
охранников 3 человека.

17-го мая с. г. из леса пропала лошадь темно-гнедой масти, грива на право, на лбу звезда, по левой стороне около хвоста отчетливо виден выстриженный оттиск «4062». Под седелкой подпарина. Мерин 9 лет. Знающих просьба сообщить: Чебоксары, Опытному лесхозу.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн—4—26, пропагандăпа парти пурнăç пайĕн — 5—31, ялхуçалăх пайĕн — 3—99, комсомол пурнăç пайĕн — 0—85, издательство конторин — 0—23.

НТ 505. Гор. Чебоксары, типография № 1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 260. Ф. 6, 58 64 п: я: